4169 VI-138

# „НИМĔÇ ВАРВАР-ТĂМИСĔН“ ИРСĔР ĔÇĔСĔМ

★

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1941

# „НИМĔÇ ВАРВАР-ТĂМПУÇСЕН“ ИРСĔР ĔÇĔСЕМ

КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1941

# „НИМĔÇ ВАРВАР-ТĂМПУÇСЕН“ ИРСĔР ĔÇĔСЕМ

Вăтам ĕмĕрти Европа историне Тевтон орденĕпе меченосецсен орденĕнчи нимĕç рыцарĕсем тискер страницăсем çырса хăварнă. Çак Балти тинĕсĕ тăрăхĕнчи халăхсене хăйсен жертви туса хунă авантюристсен тата ансат пурăнма юратакан çынсен юнлă ĕçĕсем çинчен истори каласа парать. К. Маркс: прохвостсем тесе ят панă нимĕç рыцарĕсем, Балтика тăрăхĕнчи çĕр-шывсене вутпа хĕç айне туса, хĕрарăмсемпе ачасене вĕлерсе, хăйсен киревсĕр ĕçĕсене тунă. Çитменнине тата вĕсем хăйсен киревсĕр ĕçĕсене, хальхи вăхăтра Гитлер вуншар пин çынсене, çав шутрах—çĕршер чиркӳ çыннисене те вĕлерсе: „Пирĕнпе турă!“ тесе çухăрашнă пекех, „турра мухтава кăларатпăр“, тесе тунă.

Германи рыцарĕсем Балтика тăрăхĕнчи çĕр-шывсене туртса илесси пирвайхи пин çул вĕçĕнчех пуçланнă. 12-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче нимĕç вăрă-хурахĕсем Эльбапа Висла юханшывĕсем хушшинчи территоринче çирĕпленсе ларнă. Вĕсем унта пурăнакан мирлĕ халăхăн пĕр пайне пĕтерсе тăкнă, ыттисене хырçă тӳлекенсемпе крепостнойсем туса хунă. Çакăн хыççăн вара нимĕç князь-рыцарĕсем Висла юханшывĕн хĕвел-

тухăç пайĕнче выртакан Балтика çĕрĕсене ярса илме пуçланă.

Вăрă-хурахсене вырăнти халăхсен пуянлăхĕ илĕртсе тăнă. Кунта пурăннă эстсен, латышсен (ливсен), курсен, литовецсен тата пруссен йăхĕсем ялхуçалăх, пахча-çимĕç, сад-пахчи, пулă, хурт-хăмăр, сунар, тăвар кăларас ĕçсемпе пурăннă.

Нимĕç захватчикĕсен Балтика тăрăхĕнчи çĕр-шывсенчи айăплă ĕçĕсене пирĕн саманана ун чухнехи вăхăтсенчен çитнĕ запискăсем, Генрих Латвийский запискисем (хроника) лайăх кăтартса параççĕ. Вăл—католиксен пупĕ, çырса хăварнă нумай событисенче вăл хăй пулнă, хăй курнă. Вăл нимĕç вăрă-хурахĕсене мухтава кăларас тĕллев тытнă, анчах та, тĕрĕссипе илсен, унăн çырăвĕсем халăх юнĕпе хĕрелнĕ „йытă-рыцарьсене" айăплакан акт пулса тăнă.

1184 çулта монах-августинец Мейнард купецсен карапĕ çинче пырса Хĕвеланăç Двина тинĕсе юхса кĕрекен вырăна анса юлнă. Кунта темиçе лива çынне тĕне кĕртнĕ те, вăл вырăнти халăха хăйне валли чулран купаласа зáмок тутарттарнă. Нимĕç рыцарĕсем, христианство тĕнне сарас сăлтавпа килсе, вырăнти халăха крепостной çынсем туса хуни часах палăрнă.

Мейнард вилнĕ хыççăн епископ Бертольд рыцарьсен войскисене пухнă та, ливсене кĕрешсе илме кайнă. Ăна хăйне малтанхи çапăçурах вĕлернĕ. Лайăх хĕçпăшалланнă, хулăн бронясем тăхăннă профессиональнăй çынвĕлерен-

семпе—рыцарьсемпе—хӳтӗлӗхсӗр халӑх хуш-шинче хаяр та вӑйлӑ кӗрешӳ пуҫланнӑ.

1198 ҫулта Бертольд хыҫҫӑн Альберт Апельдернский Лифляндия епископӗ пулса тӑнӑ. 1202 ҫулта вӑл „турӑ рыцарӗсен“ е меченосецсен орденӗ (Ливон орденӗ) тӑвать. Германия императорӗ IV Оттон Рига епископӗн аллине Рига хулине тата унпа кӳршӗллӗ облаҫсене панӑ. Рыцарь-меченосецсем, ҫар тӗлӗшӗнчен хӑйсем вӑйлӑ пулнипе усӑ курса, ливсене пӑхӑнтарнӑ та, вӗсем ҫине хырҫӑ укҫи хунӑ. Вырӑнти ирӗклӗ халӑха крепостной сынсем туса хунӑ, вӗсен вара рыцарьсен замокӗсемпе монастырӗсенче барщина ӗҫне туса пымалла пулнӑ.

Тепӗр темиҫе ҫултан Эстляндине туртса илес ӗҫ пуҫланнӑ. Эстсем паттӑрӑн ҫапӑҫнӑ. Нимӗҫсем пур ҫӗрте те вырӑнти халӑха, вӗсем хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкма пултарнӑ хыҫҫӑн, нимӗн хӗрхенмесӗр пӗтерсе пынӑ.

1208 ҫулта рыцарь войскисем эстсене хирӗҫ Унгавние похода тухнӑ. Акӑ мӗн ҫырнӑ ҫакӑн ҫинчен Генрих Латвийский:

„Унта вӗсем пур ҫӗрте те ялсенчи ҫуртсенче арҫынсене тата ачаллӑ хӗрарӑмсене тупнӑ, вара пурне те, хӗрарӑмсене те, пӗчӗк ачасене те, иртен пуҫласа каҫчен вӗлернӗ; Саккаль облаҫӗнчи чи лайӑх ҫынсемпе старейшинӑсене виҫҫӗр ҫын вӗлернӗ, ыттисене шутсӑр нумай вӗлерни каламасӑр та паллӑ ӗнтӗ; ҫапла вара, юлашкинчен, ҫавтери нумай вӗлерсе ывӑннипе вӗсен аллисем те хускалайми пулнӑ. Пур ял-

сенче те темĕн чухлĕ язычниксен юнне юхтарнă хыççăн, вĕсем тепĕр кунне каялла кайнă, ялсенче темĕн чухлĕ пурлăх пухнă, хăйсемпе пĕрле питĕ нумай шултăра тата вакă выльăх тата темĕн чухлĕ хĕр илсе кайнă“ (Генрих Латвийский—„Хроника Ливонии“, 110 стр.).

1209 çулта „йытă-рыцарьсем“ магистр Бертольд ертсе пынипе тепĕр хут Унгавние поход тунă. Çак поход çинчен Генрих Латвийский çапла çырнă: „унти ялсенче тарма ĕлкĕреймен çынсене пур çĕрте те тупнă... Хăйсем çитме пултарнă пур ялсенче те вĕсем питĕ нумайăшне вĕлерсе пĕтернĕ, ыттисене тыткăна илсе кайнă; пурлăх нумай ярса илнĕ, хăйсемпе пĕрле хĕрарăмсемпе хĕрсене илсе кайнă, ялсене пушатса хăварнă, питĕ нумай çын вĕлерсе пĕтернĕ тата вăйлă пушарсем кăларнă, ун хыççăн вара киле таврăннă“ („Хроника Ливонии“, 116 стр.).

Тепĕр икĕ çултан нимĕç рыцарь вăрă-хурахĕсем Сакkаль облаçĕ çине татах тапăннă. Унта çитсен вĕсем отрядсене пайланса ялсем тăрăх саланнă, „тĕл пулнă арçынсене вĕлерсе пĕтернĕ, ачасемпе хĕрсене, пурне те тыткăна илнĕ, лашисемпе выльăхĕсене Ламбита ялĕ патне хăваласа кайнă“. Тепĕр кунне вĕсем халăха асаплантарма тытăннă: „Унта вĕсем арçынсемпе хĕрарăмсем нумай тупнă, вĕсене хăйсен япалимĕнĕпех вăрмантан хăваласа кăларнă хыççăн, арçынсене вĕлернĕ“, пурлăхĕсене туртса илнĕ.

Çакăн хыççăн вара рыцарьсенчен пĕр пайĕ

Нурменгундэ текен кӳршĕ облаçе кайнă, кунта „ялсене пурне те çунтарса янă, арçынсене вĕлерсе пĕтернĕ; хĕрарăмсене, лашасене тата выльăхсене туртса илнĕ“ („Хроника Ливонии“, 135 стр.).

1219 çулта меченосецсем Виронине, „тырă лайăх пулакан, айлăмсенче выртакан тĕлĕнмелле илемлĕ уйхирлĕ çĕршыва“ кайнă. Виронецсем хăйсен килĕсем патне каçхи çĕр тĕттĕмĕ витĕр усал та хаяр тăшман пытанса пырасса шутламан та. Çын вĕлерес профессине илнĕ рыцарьсем ушкăнсене уйăрăлнă та, округсем тăрăх çавăн пекех вăрттăн саланнă. „Вĕсем вара Виронире пур çĕрте те халăха ватти-вĕттипех ялсенче тупнă та пурне те вĕлерсе тухнă; арçынсене никама та каçару паман, хĕрарăмсене тыткăна илнĕ, лашасене тата выльăхсене нумай хуса кайнă, пурлăх нумай илнĕ“ („Хроника Ливони“, 188 стр.). Халăха вĕлерсе тăкас тата ялсене çаратас ĕç пилĕк куна пынă.

Тепĕр вырăнта Гервен çине тата тепĕр хут Вирония çине поход туни çинчен каласа панă. Кунта та нимĕç рыцарĕсем ялсене çаратнă, мирлĕ халăха вĕлернĕ, çĕршыва пушă хир туса хăварнă. „Вĕсем Каретэн ялĕнче ултă кун тăнă, таврари ялсене пурне те çунтарса, çаратса пĕтернĕ, юланутлисем хушшинчен вăйлăраххисем Вирония çине кайнă, ку çĕре те çавăн пекех çаратнă, арçынсене вĕлерсе пĕтернĕ, хĕрарăмсемпе ачасене вара тыткăна илнĕ, Каретэна нумай пурлăх илсе таврăннă“ („Хроника Ливо-

нии", 170 стр.). Çакăн хыççăн рыцарьсем халăха: яланах хырçăсем тӳлесе тăма килĕшсен, пусмăрлама чарăнатпăр, тесе пĕлтерни.

Нимĕç рыцарĕсем çывхарса килни çинчен илтсен халăх вăрмансене, çĕр айĕнчи шăтăксене тарса пытанма васканă, анчах та ирсĕр çынвĕлеренсем вĕсене унта та тупнă. Пĕрехинче меченосецсен войски каллех Эстонине пырса кĕнĕ те гарионецсене çĕмĕрме тытăннă. Халăхсем нумайăшĕ шăтăксене пытаннă. Вара çак ирсĕр этемсем „шăтăк умне вут хунă та, шăтăкра ларакан халăха кунĕн-çĕрĕн тĕтĕмпе тĕтĕрме тытăннă: пурне те—арçынсене те, хĕрарăмсене те—тĕтĕмпе антăхтарса çитерни. Çакăн хыççăн вĕсем пĕрисене—тĕтĕмпе антăхса çитнĕ çĕртен, теприсене—ни вилĕ, ни чĕрĕ çĕртен, виççĕмĕшсене—вилĕ çĕртен кăларнă та, сывă юлнисене пурне те вĕлернĕ е тыткăна илсе кайнă. Пурлăхсене, укçасене, тумтирсене тата ытти япаласене хăйсене валли илнĕ. Пĕтĕм шăтăксенче тĕтĕмпе антăхса çитнисем, арçыннехĕрарăмне пĕрле илсен, пин çын таран пулнă. Вара ливсем, тевтонсемпе пĕрле, мăнкăмăллă чĕресене лăпкăна кĕртнĕшĕн тата христианство тĕнне çавăрнăшăн турра тавтуса каялла кайнă" („Хроника Ливонии", 195 стр.).

Нимĕç „йытă-рыцарĕсем" чурана кăларнă халăх çак ирсĕр пусмăрçăсене хирĕç пĕр хут çеç мар тăнă. Сăмахран, 1212 çулта, ливсен пысăк восстанийĕ пулнă. Восстани тăвакансем рыцарьсен пысăк войски çине тапăннă та, ăна

хытă çĕмĕрнĕ; çакăн хыççăн вĕсем нумай вăхăт хушши паттăрăн çапăçнă. Восстанине çĕкленнĕ халăх: „Ливсем, çирĕп тăрăр, тевтонсен чурисем пулас мар тесен—çапăçăр!“ тенĕ („Хроника Ливонии“ 144 стр.).

Эстсем те темиçе хут восстанине çĕкленнĕ.

Генрих Латвийский каласа паракан ĕçсем пулнă вăхăтрах ĕнтĕ нимĕç рыцарĕсен тепĕр ушкăнĕ авалтан литовецсен йăхĕ пурăнакан Пруссине çаратнă. Пушарсен тĕтĕмĕ, сапаланчăк та вăйсăр халăхсен çырма пек юхакан юнĕ ĕнтĕ юнĕçен „нимĕç варвар-тăмпуçсен“ (Маркс нимĕç рыцарĕсене çавăн пек ят панă) „цивилизаторла миссийĕ“ çинчен калаççĕ.

Хăйсен ирсĕр ĕçĕсене тунă чухне нимĕç рыцарĕсем—эпир язычниксем хушшинче христианство тĕнне саратпăр, тенĕ. Тĕрĕссипе вара, католиксен тĕнне сарас тени вăл—туртса илме çĕнĕ çĕрсем шыракан, ытти халăхсене хăйсен чурисем туса хума тăрăшакан нимĕç князĕсен вăрă-хурахла, çаратулла планĕсене пытарса тăма кирлĕ пулнă.

Вăтам ĕмĕрсенчи „йытă-рыцарьсен“ юнлă ĕçĕсем темĕн пек йĕрĕнчĕк, ирсĕр пулнă пулсан та, вĕсем пирĕн саманари нимĕç фашисчĕсен тискерлĕхĕпе танлаштарсан, тĕксĕмленеççĕ.

Нимĕç вăрă-хурахĕсем пăхăнтарнă халăхсем хăйсен пусмăрçисене хирĕç çĕкленнине, пусçăрланса кайнă нимĕç йыттисене аслă вырăс халăхĕ 1242 çулта Чудски кӳлĕ çинче тата

ытти нумай вырӑнсенче те епле ҫапса ҫӗмӗрнисене истори лайӑх пӗлет.

Анчах та фашистсем ҫак уроксене начар ӑнланса юлнӑ. Пирӗн тӑван ҫӗршыв ҫине тапӑннӑ усал та тискер тӑшман питех те йӑнӑшрӗ. Совет Союзӗнчи халӑхсем, пурте пӗр ӗмӗтпе тухса, хӑйӗн ӗҫӗн тӗрӗслӗхне ӑнланса, фашистсен урса кайнӑ йыттисене хирӗҫ отечественнӑй вӑрҫа хаяррӑн ҫӗкленчӗҫ. Кӗрешӳ хаяр та йывӑр, анчах та вӑл пурпӗрех юнӗҫен фашистсене ним хӑварми ҫӗмӗрсе тӑкнипе вӗҫленмелле.

А. САМСОНОВ.

# ФАШИЗМĂН ТИСКЕР ПАТШАЛĂХĔ

## Рассистла кретинизм

Германи фашизмĕ шухăшĕпе славян халăхĕсем кĕçĕн расса пулса тăраççĕ. Паллах, славян халăхĕсен шутне вырăссем, украинецсем, поляксем, болгарсем, сербсем, чехсем тата ытти нумай халăхсем кĕреççĕ. Фашистсен славянсем тĕлĕшпе тунă планĕсем фашистла рассистăн К. Вольфăн çак сăмахĕсенче уççăн палăрса тăраççĕ:

„Политикăллă правăсем аслă рассăсен привилегийĕ çеç. Кĕçĕн расса – славянсем — ирĕкре пурăнасси пĕртте пулмалла мар...“

Фашизм, хăйне „аслă расса“ вырăнне хурса, славян халăхĕсен çĕрне туртса илсе хăйĕн хăрпăрлăхĕ тăвасшăн. Вăл пур çĕрте те нимĕçсем пуçпулса тăрас йĕркене тăвасшăн. Славянсем çинчен фашист Вольф çапла çырать:

„Пуçпулса тăракан рассăн шкулĕсенче кĕçĕн расса вĕренмелле мар, ун валли, пĕтĕмĕшпе илсен, шкулсем те пулмалла мар, тата унăн чĕлхипе обществăллă вырăнсенче калаçтармалла мар. Вăл кирек те мĕнле майпа хирĕç тăма хăтланнине путарса пымалла тата ăна тунă

чухне средствăсем тĕлĕшĕнчен нимĕн чухлĕ те чарăнса тăмалла мар".

Акă ĕнтĕ Германи фашизмĕн планĕсем, акă мĕнле тĕллевпе вăл пирĕн çине тапăнчĕ. Вăл Совет Союзĕнчи халăхсене пĕтерсе тăкасшăн, пире пурне те чура тăвасшăн тăрăшать. Хăй туртса илнĕ Польшăра вăл поляксене нимĕçсен шкулĕсенче вĕренме, нимĕçсен кварталĕсенче пурăнма, нимĕçсем валли уйăрса хунă столовăйсемпе киносене çӳреме чарнă; вăл нимĕçсем поляксене ал парассине чарнă, поляксенчен рикша (турттаракансем) тунă. Çав рикшасем урапасене кӳлĕнсе Варшавăпа Краков хулисен урамĕсем тăрăх Германи офицерĕсене турттарса çӳреççĕ. Германи фашизмĕ çавна пирĕн патра та тума шутлать.

Германи фашизмĕ пур национальностьсене те кураймасть. Англичансене вăл „лайăх мар халăх", тесе шутлать, кураймасть; французсене „негр евĕрлисем", тет; пуринчен ытла вырăссене кураймасть.

Германи фашизмĕн ирсĕр „идеологĕ", Гитлерпа çывăх тăракансенчен пĕри, Альфред Розенберг çапла çырнă:

„Ку е тепĕр славян çынни темле вĕреннĕ çын пулсан та, çавах вăл рядовой нимĕçрен нумай аялтарахра тăрать".

Украинецсем çинчен Розенберг çапла каланă: „Украина халăхĕ кĕçĕн расса пулса тăрать. Вăл нимĕç влаçĕсĕр пурăнма та пултараймасть", тенĕ.

Гитлер хăй, çак выçă, юнлă йытă, çакăн пек каланă: „Нимĕççене ытти пур халăх çыннисем те пăхăнса тăмалла тата хăйсене вĕсемшĕн хĕрхенмелле мар“, тенĕ.

Çакна ĕнтĕ тăвасшăн Германи фашизмĕ: вĕсемшĕн эпир хамăра „выльăх“ вырăнне хурса шутламалла иккен, хамăра „хĕрхенмелле мар“ иккен. Анчах кун пек нихăçан та пулас çук!

Фашистла географ Трамплер каланă тăрăх, „хĕвелтухăçĕнче Германия территорине Фински залив, Ленинград, Онега, Ладога, Пейпус кӳлли, Ильмень, Днепр, Дон тата Хура тинĕс кĕмелле“, урăхла каласан, Совет Союзĕн чĕри пулса тăракан çĕрсем Германин пулмалла иккен.

Фашистла вăрă-хурахсен бандисене çĕмĕрсе тăкатпăрах. Эпир хамăр çĕре юлашки тумлам юн юлмичченех хӳтĕлĕпĕр.

Фашизма ватса пĕтерĕпĕр.

## „Аристократсем“

Гитлер Германи рассине „аслă расса“ тенипех чарăнса тăмасть. Вăл Германи халăхне хăйне те „аристократсемпе“ „масса“ çине пайлать. Гитлерăн планĕсем тăрăх „аристократсем“ пуçпулса тăмалла, „массăсем“ вĕсене пăхăнса тăмалла. Акă мĕн çырать вăл хăйĕн çавтери ирсĕр, этеме çавтери курайман шухăшсемпе тулнă „Майн Камф“ ятлă кĕнекинче: „Масса вăл пит те сахал ăнланса илме пултарать“, тет.

„Аристократсем“ „массăпа“ хутăшса ан кайч-чĕр тесе, вĕсене пĕр-пĕринпе мăшăрланма чарнă. Çак тĕлĕшпе 1933 çулти ноябрĕн 23-мĕшĕнче „Мăшăрланнипе ырăмар ĕçсем туни çинчен“ ятлă закон кăларнă. Çав закон тăрăх, хресчен — хресчен хĕрне çеç, дворянин—дворянин хĕрне çеç качча илме пултарать. Хресчен хĕрĕ дворянина качча кайса ача çуратсан, çав ачана „законсăр çуратнă“ ача тесе шутлаççĕ. Фашизм çапла вара Германи дворянĕсен „таса“ юнне хытă сыхлама тăрăшать.

Фашизм—вăл çынçиенсен чи вăрă-хурахла бандин пусмăрлăхĕ пулса тăнине пĕлтерет.

Фашистсен законĕсем тăрăх хĕрарăмсем те „выльăх пек çынсем“ кăна пулса тăраççĕ.

Германин пĕтĕм халăхне тата оккупациленĕ çĕршывсенчи халăхсене фашистсем кĕçĕн тата правăсăр çынсем туса хучĕç. Кун пек йĕркене вĕсем пур çĕршывра та тума шутлаççĕ.

## Иртĕнсе кайни тата террор

Çапла ĕнтĕ тискер патшалăхăн, хăйсене „аслă çынсем“ текен шакалсен патшалăхĕн законĕсем. Фашистсем каланă тăрăх, рабочисем, хресченсем, интеллигенци — вĕсем „кĕçĕн“ çынсем кăна. Германире халăха хирĕç чăтма çук тискер террор пырать.

Акă илĕпĕр 1936 çулта тухнă „Дейтше фолькс-цейтунг“ ятлă хаçатран ик-виç факт.

Пĕр Пруссири (Ґерманин хĕвелтухăçĕнчи облаçĕ) тĕрмесенче кăна 1935 çулăн вĕçĕнче 109.060 çын пулнă. Мĕн чухлĕ-ши вĕсем пĕтĕм Германире, мĕн чухлĕ-ши вĕсем концентрациллĕ лагерьсенче?

Германири пур больницăсем те гестапоран (вăрттăн полицирен) распоряжени илнĕ. Çав распоряжени вĕсене чирлĕ çынсем (наркоз айĕнче е аташнă чухне), фашизм пирки кăмăлсăр пулса, сăмахсем персе яни-яманнине астуса тăма хушнă.

Фашизма хирĕç калаçнисем çинчен пĕлтерсе тăнăшăн гестапо ятарласах укçа тӳлемелли таксă тунă.

Шкулсенче фашистсем ачасене хĕнес йĕрке кĕртнĕ.

Чиркӳ прихочĕсене официальнăй распоряжени панă. Çав распоряжени тăрăх священниксене, вĕсене фашистла саламланине хирĕç салам каламасан, вырăнтан кăлараççĕ тата ссылкăна яраççĕ.

Кунта эпир темиçе тĕслĕх çеç илсе кăтартрăмăр. Халĕ, вăрçă вăхăтĕнче тата Германире массăллă выçлăх пулнă вăхăтра, хăй фашизмпа кăмăлсăр пулнине халăх сахалтарах пытарнă чухне, çак террор вунă хут вăйланнă.

Çав террора Германи фашисчĕсем пире хирĕç те хатĕрлеççĕ. „Выльăх пек çынсене“ хĕрхенсе тăма вĕсем пĕртте шутламаççĕ. Вĕсем вырăс

халăхĕн территорине туртса илме тата халăха „вутпа та хĕçпе“ пĕтерсе тăкма хатĕрленеççĕ.

Анчах фашистла бандăсене çĕмĕрсе тăкăпăр. Ылханлă фашистла пуçкасансем хăйсен юнĕ ăшнех путса вилĕç.

**В. МИХАЙЛОВ.**

---

КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чебоксары Чувашской АССР

Редактор перевода В. Долгов.

Подписано к печати 8/VIII—41. г. НТ 5181.
Тираж 3000 экз. Объем 0,5 п/л. Заказ № 399.

Гор. Чебоксары, тип. № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР.

Цена 20 коп.

# ПРЕСТУПЛЕНИЕ НЕМЕЦКИХ „ВАРВАРОВ-БОЛВАНОВ“

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР
1941